Были времена, когда сотовый телефон был роскошью для обывателя. Но все меняется. Сотовые телефоны в последнее время стали покупать все – от мала до велика. Иной раз их используют не по назначению. Так, 23 декабря 2007 года в дежурную часть МВД Чувашии от жителя д. Сосновка Ибресинского района ЧР Петрова Михаила Леонидовича поступил звонок с его «элитного» телефона: якобы в д. Сосновка избивают мужчину. В связи с этим, для предотвращения преступления на место происшествия выехала оперативно-следственная группа из числа наиболее подготовленных сотрудников ОВД. Однако по приезду на место было установлено, что М. Л. Петров со своими подвыпившими закадычными друзьями Д. В. Антоновым, А. В. Индеркиным решили испытать возможности сотовой связи, подшутив над работой правоохранительных органов.

«Связисты» были доставлены в ОВД и привлечены к административной ответственности за появление в общественных местах в состоянии опьянения по ст. 20.21 КоАП РФ, а М. Л. Петров за свою шалость с телефоном также привлечен к административной ответственности по ст. 19.13 КоАП РФ за «заведомо ложный вызов специализированных служб».

Согласно ст. 19.13 КоАП РФ за «заведомо ложный вызов специализированных служб» (пожарной охраны, милиции, скорой медицинской помощи) предусмотрена административная ответственность в виде штрафа в размере от 1000 до 1500 рублей. «Шутка» по телефону обходится не дешево.

***П. ПЕРЕПЕЛКИН,***
***старший группы ППСМ ОВД по Ибресинскому району.***

СОВЕТЫ СПЕЦИАЛИСТА

# Тараканы и средство борьбы с ними

В жилых помещениях встречаются более 50 видов тараканов: рыжие (пруссак), черные, американские и другие. Чаще всего рыжие и черные тараканы живут на кухне, в ванных и туалетных комнатах, а также в мусоропроводах многоэтажных зданий. Большая подвижность и активность тараканов в темное время суток позволяет им в дневное время отсиживаться во всевозможных укрытиях: щелях стен и кухонной мебели, за плинтусами и отопительными батареями, под раковинами, за наличниками дверей, и в других темных укромных местах, практически труднодоступных для человека. Закрытые шкафы, промежутки между стеной и шкафчиками – все это создает идеальные условия «общежития» тараканов.

Тараканы легко приспособляются к любым условиям при достатке пищи, влаги, места для укрытия и оптимальной температуре.

Тысяча взрослых тараканов в среднем за год поедают 10 кг пищевых продуктов животного или растительного происхождения. Тараканы охотно могут поедать также кожу и шелк, шерсть и бумагу, а своими испражнениями загрязнять и портить продукты питания, вещи и механически переносить возбудителей ряда инфекционных заболеваний человека.

Чтобы не допустить размножения тараканов, необходимо поддерживать в квартирах чистоту и порядок, а также вовремя ликвидировать все технические дефекты, которые могут способствовать проникновению насекомых из соседних помещений.

Продукты питания следует хранить в закрытой посуде, своевременно убирать остатки пищи и кухонные отходы, не оставляя их в помещении на ночь. Все щели и отверстия в стенах, возле раковин, водопроводных и отопительных труб, плинтусов и т. п. должны быть тщательно заделаны. Следует исключить доступ насекомых к источнику питья. При появлении тараканов борьбу с ними необходимо начать как можно раньше. Для уничтожения тараканов в квартире или жилом доме нужно провести тщательную уборку.

При обработке помещения каким-либо инсектицидом особое внимание следует уделять кухне, ванной комнате и туалету.

Инсектицидами (т. е. препаратами от тараканов) обрабатывают плинтуса, щели в облицовочной плитке, пространство за батареями отопления и водопроводными трубами и другие места, которые могут служить укрытием для тараканов или путями их передвижения.

Обработку желательно поводить во второй половине дня. Приманки расставляют в местах, недоступных детям и домашним животным. Закончив работу, вымойте руки с мылом.

Успешная борьба с тараканами возможна лишь при сочетании общегигиенических мероприятий и химического метода с охватом одновременно всего дома, предприятия или учреждения.

ПОМНИТЕ! Тараканы находят себе благоприятные условия для расселения чаще всего там, где допускается даже небольшая захламленность и не соблюдаются санитарно-гигиенические правила содержания помещений.

***Т. КОЗЛОВА,***
***помощник врача-эпидемиолога ОПД филиала ФГУЗ «Центр гигиены и эпидемиологии в ЧР-Чувашия» в п. Вурнары.***



# «ПАТВАР», çулу такăр пултăр!

/Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр./.

пе хастарлăха малти вырăна хуракансемшĕн сывă пурнăç йĕркин символне пĕтĕмлетсе тăраканĕ пулĕ. Сăмах майăн каласан, шăпах çакăн пирки çырать те хаçатăн паянхи номерĕнче пичетленнĕ хăйĕн материалĕнче Василий Варганов обществăлла корреспондент.

«Голицын» ХК АХОн тĕп директорĕ А. В. Коротков сăмахĕ кĕске пулчĕ. Республика Президенчĕпе район пуçлăхне хăйсене куллен тимлĕ пулăшса пынăшăн тав тунă май, вăл Анатолий Иванович Петрова символла уççи тыттарчĕ.

Савăнăçлă митингра пирĕн мухтавлă ентеш, тĕнчери, Европăри ăмăртусенче пĕрре кăна мар çĕнтернĕ Лидия Григорьева марафонка та сăмах илчĕ. Унăн сăмахĕ – спорт тĕнчинче пуçласа утăм тăвакансене панă пил.

Микрофон умĕнче – район пуçлăхĕ А. И. Петров. «Эпир хамăра пулăшакансем пур чухне çурт-йĕр тума пĕлетпĕр», – терĕ Анатолий Иванович. пысăк стройкăна ăнăçлă вĕçлеме пулăшнăшăн республика пуçлăхне тав турĕ. Чăваш Енри чи пысăк спорт комплексĕн сметăпа пăхнă хакĕ 120 миллион ытла тенкĕ. Çав укçан 40 процентне федераци, 60 процентне республика бюджечĕсенчен уйăрнăскерне, строительсем пĕтĕмпех ĕçе кĕртнĕ. Çапла, районта пурăнакансем Хĕл мучирен чаплăран чаплă парне илчĕç.



Иртнĕ вăхăтра кун пирки ĕмĕтленме те пултарайман эпир.

Акă, кĕтнĕ самант. Комплекса кĕнĕ çĕрте çирĕплетнĕ хăюна касма республика Президентне Н. В. Федоровпа район пуçлăхне А. И. Петрова чыс тухрĕ. Сывлăх çурчĕн алăкĕсем уçă паянтан! Мĕн тери хӳхĕм керменлĕ пулса тăчĕ Йĕпреç ен яшкĕрĕмĕ! Çак кунсенче уйрăмах савăнăçлисем камсем тетĕр? Паллах, ачасем! Ӳлĕмрен спорт комплексĕнче вĕсем валли «Хаваслă стартсем», «Эпĕ тата атте-анне – спорта юратакан çемье» йышши ăмăртусем тăтăшах иртĕç. Спорт комплексĕн ертӳçи те, тренерсем те пулас олимпиецсен кăмăлне тивĕçтерессине чи малти вырăна кăларса тăратĕç. Ачасем кунта хăйсен вăйхалне, çивĕчлĕхне, хăвăртлăхне, кĕрешӳ хĕрӳлĕхне туйма хăнăху илĕç. Çĕнтерӳ туни вĕсене савăнтарĕ, выляса яни ӳлĕмрен хастарлăха ӳстерме пулăшĕ. Спорт керменĕнче вĕсене мĕн кирли пĕтĕмпех куç умĕнче: кунта тем пысăкăш зал та, бассейнсем те, тренажер залĕпе ташă залĕ те, сывлăха çирĕплетмелли центр та, администраци пӳлĕмĕсем те пур. Малашне вăл спортпа культурăна пропагандăламалли шанчăклă вырăн пулса тăрĕ.

Спорт уявĕ вĕçленнĕ хыççăн республика Президенчĕ тата район пуçлăхĕ Эйпеç ял тăрăхĕнчи Федоровсен килти хушма хуçалăхне çитсе, унăн ĕçĕхĕлĕпе паллашрĕç.

***Геннадий КУЗНЕЦОВ.***



**ӲКЕРЧĔКСЕНЧЕ:** *Чăваш Республикин Президенчĕ Н. В. Федоров районти чи вăйлă кире пукançăсемпе; Йĕпреçри искусствăсен шкулне çӳрекен çамрăк ташăçăсем лартнă композици; çамрăк спортсменсем хăйсем мĕн пултарнине кăтартнă самант.*

***Д. ДИМИТРИЕВ сăнӳкерчĕкĕсем.***

# ЧИ ЧАПЛĂ ПАРНЕ

Çĕнĕ 2008 çула кĕрес умĕн Йĕпреç поселокĕнче савăнăçлă лару-тăрура «Патвар» физкультурăпа спорт комплексĕн алăкĕсем яриех уçăлчĕç. Çынсем Чăваш Республикин Президенчĕ Н. В. Федоров уява килессе тӳсĕмсĕррĕн кĕтрĕç. Эпир Спорт çуртне уçма килнĕ нумай-нумай хăнасене, спорт ветеранĕсене куртăмăр çав кун. Çамрăк спортсменкăсем хăйсен ăсталăхне кăтартрĕç. Кермене пырса кĕнĕ çĕрти лапам чăннипех те Çĕнĕ çул бал-маскарадне аса илтерсе тăчĕ.

Çакна палăртмалла, Спорт комплексĕ район центрне çĕнĕ сăн кӳрет. Вăл ӳлĕмрен хăйĕн пĕлтерĕшне татах та ӳстерĕ. Кунта тĕрлĕ çулсенчи çынсем, çав шутра шкулта пĕлӳ илекен ачасем те, килсе çӳреме тытăнчĕç. Çакăн хыççăн халăх сывлăхĕ палăрмаллах лайăхланĕ. Кунпа пĕрлех çĕнĕ спортсменсем палăрĕç, çамрăксен хушшинче саккуна пăсас çул çине тăнисем чакĕç.

***В. ВАРГАНОВ, сывлăх сыхлавĕпе спорт ветеранĕ.***

# Урок-çул çӳрев

Нумаях та пулмасть Буинскри вăтам шкула математикăна вĕрентекен учительсем ларăва пуçтарăнчĕç. Унта математика учителĕсен районти методика пĕрлешĕвĕн ертӳçи Т. И. Лаврентьева, Йĕпреçри 2-мĕш номерлĕ вăтам шкул вĕрентекенĕ Н. З. Федотова, Йĕпреçри 1-мĕш номерлĕ вăтам шкул вĕрентекенĕ М. И. Игнатьева, Эйпеçри вăтам шкултан Т. Ф. Ильина, Энтриелĕнчи тĕп шкултан Н. В. Максимова, Ирçе Çармăсри вăтам шкултан И. С. Филипповапа З. Д. Яковлева, Пучинкери вăтам шкултан Л. П. Шибаева, Хурамалти вăтам шкултан В. П. Александрова хутшăнчĕç. Хăнасем малтан буинсксен çĕнĕ шкулĕпе паллашрĕç. Ку здание хута янăранпа 5 çул иртрĕ кăна, апла пулин те çак тапхăрта çĕнсе илнĕ çитĕнӳсемпе мухтанма та пулать. Ачасем çутă та хăтлă классенче пĕлӳ пухаççĕ. Вĕрентекенсем валли урока хатĕрленмелли, уроксем хушшинчи канмалли вăхăтсене ирттермелли условисем çителĕклĕ. Шкул коридорĕ аслă, унăн стенисене тĕрлĕ стендсем илем кӳреççĕ. Ачасем хăйсен иккĕмĕш тăван килне «Шкул хули» тесе ят пани те ахальтен мар. «Шкул хулине» темиçе микрорайона пайланнă, вĕсене пурне те хăйне евĕрлĕ ятсем парса тухнă. Хулара вĕренекенсем – пултарулăха анлăлатассишĕн чунтан çунакансем. Вĕсем ӳнер, алă ĕçĕсемпе интересленеççĕ, хăйсен ăсталăхне ӳстереççĕ, фотографи енĕпе те кăсăкланаççĕ. Вĕсен ĕçне хаклаканĕсем те, ăсталăхпа уйрăмах палăрнисене çул параканĕсем те çумрах, вĕрентекенсем хавхалантарса пынипе ачасем Раççей тата республика шайĕсенче иртекен ăмăртусенче, олимпиадăсенче дипломсем, грамотăсем, кубоксем çĕнсе илеççĕ.

Ачасен тата вĕсен ашшĕ-амăшĕсен юратнă вырăнĕ – шкулти информатика кабинечĕ, унта Интернетпа çыхăнма хатĕр тăракан 13 компьютер вырăн тупнă. Кабинет хуçи Ольга Петровна Петрова компьютерпа ĕçлесе ларма кăмăл тунă вĕренекенсене ялanах ăшă кулăпа кĕтсе илет. Вăл ертсе тата йĕркелесе пынипе вĕренекенсем тĕпчев ĕçĕсене район тата республика шайĕнчи наукăпа практика конференцийĕсене хутшăнаççĕ, дипломсемпе грамотăсем, парнесем кăна мар, медальсем те çĕнсе илеççĕ. Ку кабинетрах принтерсемпе сканерсене вырнаçтарнă, мультимедийнăй проекторсем, цифрăллă камерăсем, телевизорсем, DVD проигрыватель пур. Ольга Петровна тăрăшнипех кунта видео-фильмсем, иллюстрациллĕ нумай материалсем упранаççĕ. Учитель çĕнĕ оборудованисемпе тĕллевлĕн усă курма пĕлет, ачасене, вĕрентекенсене, ытти çынсене компьютера алла илме хăнăхтарать, презентацисем ирттерет, творчество ĕçĕсене халăх çине кăларма пулăшать. Вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекен Л. С. Гулянова учительницăпа пĕрле вĕсем тăван çĕршыв тĕп хулипе – Мускавпа паллаштаракан урок-çулçӳрев хатĕрлерĕç, 8-мĕш класра вĕренекенсем çак çулçӳреври пулса курчĕç те ĕнтĕ. Адель Асеинова çамрăк проводница çулçӳревçĕсене «Чăваш Ен – Мускав» поезд маршручĕпе паллаштарчĕ. Вăрăм çула тухнă ачасене пĕрре те тунсăхлă пулмарĕ. Вĕсем «Хаваслă математика», «Халăх ăслăлăхĕ», «Спорт», «Математика вăрттăнлăхĕсем» станцисенче чарăнса тăчĕç. Ачасем Г. Остер хатĕрленĕ кулăшла задачăсен «тыткăнне» те лекрĕç, вĕсен «тыткăнран» çăлăнса тухас тесен, нумай йывăр задачăсене çĕнтерсе тухма тиврĕ. Çĕнтерӳçĕсене, паллах ĕнтĕ, сумлă чыслав кĕтсе тăчĕ. Вĕсем «Çамрăк математиксем» кафере канчĕç.

Руслан Минатуллинпа Рафаэль Незеев Мускаври Кремль тăрăх экскурси ирттерчĕç, Третьяков галерейине илсе çитерчĕç. Пушкин талантне сума сăвакансем унăн сăввисене поэт палăкĕ умĕнче пăхмасăр вуларĕç. Математикăпа поэзи пĕр-пĕринпе килĕштермеççĕ, тесе калĕç хăшĕ-пĕрисем, анчах... Буинскри вăтам шкулти вĕрентекенĕсемпе вĕренекенĕсем çак предметсене пĕрлештерекен нумай пĕрпеклĕхсене «шыраса тупнă». Çакăн çинчен вĕсем тĕпчев ĕçĕ те çырнă, унпа ытти учительсем те анлăн усă курма пултараççĕ.

Çак тĕлпулу, учительсен ларăвĕ, питех те усăллă иртрĕ. Нумайăшĕ çĕннине алла илчĕ, пĕр-пĕринчен вĕренчĕ, паха опытпа туллин паллашрĕ. Çак лару вĕрентекенсене республикăра иртекен 19-мĕш методика фестивальне ăнăçлăн хутшăнма майсем туса пачĕ, вĕсем математикăна вĕрентес ĕçри чи пахине, чи кирлине унта илсе кайĕç.

***Т. ЛАВРЕНТЬЕВА, математикăна вĕрентекенсен районти методика пĕрлешĕвĕн ертӳçи.***




Николай Вячеславович Степанов – «Красный партизан» колхозăн тракторисчĕ. Вăл 2007 çулхи кĕрхи çĕртмере хăйĕн ĕçченлĕхĕпе палăрнă, районти сухаçăсен ăмăртăвĕнче малти вырăна тухнă. Ăна çакăншăн дипломпа наградăланă.

***Д. ДИМИТРИЕВ сăнӳкерчĕкĕ.***

ПОЭЗИ

# Çĕнĕ çул – сыхă пул, Кивĕ çул – сывă пул

### СОНЕТ

Эпир çак уява уйăхĕпех кĕтетпĕр,
Чи ырă кăмăл парнелет вăл çынсене.
Пӳртри ем-ешĕл чăрăша
илемлететпĕр,
Ларатпăр çемьепе тулли кĕрекене.
Çĕн çул ячĕпеле пĕр шухăшлăн
калатпăр:
Ан юхтăр мирлĕ халăх юнĕ Çĕр çине.
Эпир халь Путина – Президента –
шанатпăр, –
Кару тытма пĕлет Раççей тилхепине.
Нухрат тупма пĕлсессĕн
енчĕкре тытмалăх,
Çăкăр-тăвар куллен пулсан
сĕтел çинче;
Вара телейлĕ, вăрăм пулĕ
пирĕн ватлăх, –
Илемлĕн, ыррăн, çуттăн курăнĕ тĕнче.
Ĕмĕр сакки, тантăшăмсем,
пит сарлака –
Анчах ыр çыншăн вăл ан пултăрччĕ яка.

Хĕн-хур, инкек тӳсекене курса,
Залри çын куççульпеле йĕрет.
Ĕç хыççăн çĕкленӳллĕ кăмăлпа –
Килне – çемье патне васкан.
Чунтан юратакан мăшăрупа
Шăкăлтатса сăпайлăн калаçан.
Ывăлусем – Максимкăпа Евген –
Салтак пек яшт тăраççĕ сан умра,
Кусна илместĕн эс вĕсем çинчен –
Сан çирĕп шанчăк пур малашлăхра.
Эсир чун панă йăрă ывăлсем,
Сан ырă тăхăмна тăсакансем.

3.

Нумай пĕлме юратакансене
Нихçан та паянхи çырлахтармасть.
Çын юратсах тăвать-ха хăй ĕçне –
Ун ĕмĕчĕ куллен амаланать.
Пĕлӳ тарăнлатмашкăн тăрăшса,
Университета кĕрес шутпа,
Экзаменсем парса, ăнăçтарса,
Пуçларăн ăс пухма ăнтăлупа.
Тавралăхра – чӳк уйăхĕ хуçа.
Хĕвел сар хĕр пек вăтанса кулать.
Тус-тăвану сана хисеп туса,
Телей сунса тулли черкке тытать.
«Ват çын – виç çын», –
тесе калать чăваш.
Вĕреннĕ çын – вун çын, – ку ман канаш.

***Гаврил ЛУÇ.***

# Ленинкасси каччи

### ТРИПТИХ

*Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артистне – Геннадий Васильевич Кириллова сума суса.*

1.

Театр. Асамлă, хăтлă çут кермен.
Артисчĕсем – чăн-чăн пăхаттирсем.
Артисткисем – илемлĕ Нарспирен,
Вăранăр, Шупашкар йĕкĕчĕсем!
Геннади, эс ĕмĕтленни паян
Хăв умăнта хĕвел пекех çиçет.
Пĕр спектакльте ик-виçĕ роль вылян,
Вăйу, ăсу-тăну епле çитет.
Нумай çул тăрăшса, ыр кăмăлпа
Ĕçлетĕн халăхшăн чунна хурса.
Ыррийĕ таврăнать вăл ырăпа,
Пӳртех кĕрет ытарлăн йăл! кулса.
Хисеплĕ Президент указ çырса,
Сана чыс турĕ сумлă ят парса.

2.

Артист авалхине сăнарласа,
Хальхи çынсен умне илсе килет.

# Йĕплĕ йĕркесем

Наçтаç ятлă сутăçа
Ял халăхĕ юратмасть.
Вăл çухатнă «канăçа»:
Улталама вăтанмасть.

х х х

Фермăра ĕне сăвать,
Вăл сĕтне киле йăтать.
Ăна кӳршине сутать,
Колхоз çав вăрра чăтать.

х х х

Сахал-и пирĕн хушăра
Ямăттипе пурăнакансем,
Пĕр хăраса тăмасăрах
Тăр кăнтăрла вăрлакансем!
Хăçан тасалĕ çут тĕнче
Пур йăх-яхран та йĕксĕкрен.
Кĕрлевлĕ вăхăт уттинче
Эс çын, таса пулма вĕрен.

***Василий ЧЕРНОВ***
***Хумри Ишек ялĕ.***

ТЕАТР

# Чун кисреннĕ чухне

**Иртнĕ ĕмĕрĕн сакăрвуннăмĕш çулĕсен вĕçĕнче чăвашсен паллă прозаикĕн Денис Гордеевăн «Анаталла-тăвалла» повеçĕ кун çути курнă. Ăна вăл хăйĕн 1990 çулта тухнă «Акман ыраш» кĕнекине те кĕртнĕ. Унтанпа нумай шыв юхнă. Теплерен çак произведени чăваш театровечĕн, ача-пăча театрĕн артисчĕн, Йĕпреç районĕнчи Ленинкасси ялĕнче çуралса ӳснĕ Геннадий Кирилловăн аллине лекнĕ. Повесть хăйĕн драматизмĕпе ăна тыткăна илнĕ. Геннадий Васильевич çак повесть никĕсне тĕпе хурса драма çырмаларнă.**

Алла тытнă ĕç ăнăçлă пулса тухрĕ. Хăйĕн 90-мĕш сезонне Константин Иванов ячĕллĕ Чăваш академи драма театрĕ иртнĕ çулхи юпа уйăхĕн 16-мĕшĕнче «Анаталла-тăвалла» пьеса тăрăх лартнă спектакльпе пуçларĕ. Яланхи пекех спектакле театрăн илемлĕх ертӳçи, СССР халăх артисчĕ, Раççейĕн тата Чăваш Республикин патшалăх премийĕсен лауреачĕ Валерий Яковлев лартрĕ.

Спектакльти ĕçсем республикăн кăнтăр енчи вăрманлă пĕр ялта, иртнĕ ĕмĕрĕн аллăмĕш çулĕсен пуçламăшĕнче пулса иртеççĕ. Аллă çула çитсе пыракан Анукка пĕр канмасăр колхоз ĕçĕнче те, вăрман ĕçĕнче те тар тăкать, икĕ кустăрмаллă урапа унăн аллинчен каймасть. Çынна ĕç мар, хуйхă-суйхă хуçать. Анукка пирки те (çак сăнара Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин халăх артистки Н. Яковлева уçса парать) çакнах каламалла. Пуç çĕклеме май çук инкекре пурăнать вăл. Унăн мăшăрне те, ывăлне те халăх тăшманĕ тесе айăпланă. Упăшкине персе пăрахнă. (1953 çулта Берия хушăвĕпе тĕрмерен кăларнă уголовниксене тара тытса пĕр айăпсăр Симуна вĕлерттереççĕ. Ял-йыш çак путсĕр ĕçе кам тунине сисет, анчах шарлакан никам та çук. Хăраса пурăнма вĕреннĕ Анукка та ял çине сăмах кăлармасть, инкек пирки влаç органĕсене нимĕн те

Сталин вилнĕ хыççăн ывăлне ирĕке кăлараççĕ. Симук (А. Дмитриев артист) яла таврăнать, Анукка́н ăш-чикĕ кăштах лăпланать. Ывăлĕпе мăшăрне пуç яма пулăшаканĕ, элеклĕ çырусене «анаталла-тăвалла» тесе алă пусаканĕ кӳршĕрех-мĕн. Марккиç ятлăскер (ăна С. Иванов артист питĕ ăста вылять), Симун яла таврăнсан хăраса ӳкет. Ăна, Марккиçе, вăрманти питомник бригадирне, элекçĕне тăрă шыв çине кăларма пултараççĕ-çке-ха!

Марккиç – чее çын. Чĕлхипе юптарса пыл хыптарма, ĕçĕпе чĕрене çĕçĕ лартма пултарать. Хăй пекех çăткăн ывăлĕпе – Яларпа каварлашса (А. Яковлев артист) Симуна вĕлерме тĕв тăвать. Кӳршĕрех пурăнакан Марккиçпе Ялар пĕлтермест. Симуна ял хĕрĕ Майкка (Чăваш Республикинчи çамрăксен патшалăх премийĕн лауреачĕ Е. Хрисанова) хытă юратнă. Инкек сăлтавне вăл та пĕлет, анчах Анукка пек чунне чул хушшине курса пурăнма пĕлмест. Чăтайман енне вăл ăшчиккине эрех ĕçсе лăплантарма хăтланать. Майкка сĕм ӳсĕр пулнă вăхăтпа усă курса Марккиç ăна сĕмсĕррĕн мăшкăлать, этем чăтайми хурлăх кăтартать. Майкка халь «пĕтнĕ çын» ĕнтĕ, ясар арçынсен хушшинче вăл алăран алла куçма пуçлать.

Пурăннăçемĕн Аннуккашăн та кăвак хуппи уçăлнă пек пулать. Вăл Варссук ятлă ачана (А. Степанов артист) ывăллăха илет, пăхса ӳстерет. Варссук ӳссе çитсен авланать, ял хĕрне Нинука (Н. Зубкова артистка) качча илет. Тинех Ануккан хӳтлĕх пур ĕнтĕ. Майкка çеç пурнăçра вырăн тупаймасăр тертленет, ĕçкĕ танатинчен хăтăлаймасть.

Ялта çĕнĕ шкул никĕсне чавма пуçлаççĕ. Никĕс тăпри çинче шкул ачисем тимĕр ешчĕк тупаççĕ. Ешчĕкне уçма та ансат-мĕн. Уçаççĕ те ăна ачасем, ак тĕлĕнтермĕш, унта револьвер выртать иккен. Ахалли те мар, Анукка упăшкине граждан вăрçи вăхăтĕнче ятарласа çырса парнеленĕскерех-мĕн. Хăйне арестлесе илсе кайиччен вăл ăна çĕр ăшне чавса пытарма ĕлкĕрнĕ.

Шкул ачисем ешчĕке Анукка патне илсе пыраççĕ. Вăл ăна кĕлете кĕртсе хурать. Хĕрĕнкĕ Майкка, çакна курса-итлесе тăнăскер, хăрушă шухăш тытать: револьвера кĕлетрен илсе тухмалла, унпа хăй чунтан курайман Марккиçе персе вĕлермелле. Тытнă шухăшне Майкка пурнăçлать. Хăй вăхăтне вăтăр çул ытла кĕтнĕ револьвер этем юнне çĕнĕрен юхтарать.

Денис Гордеевăн повеçĕ çакăнпа вĕçленет. Тӳрех калас пулать, повеçрен пьеса хатĕрленĕ чухне Геннадий Кириллов прозăллă произведенин тексчĕн, композицийĕн, сюжечĕн мелĕсемпе питĕ тирпейлĕн тата ăста усă курнă.

***Г. УТКИН.***

# Математика эрни пĕлӳ парать

Йĕпреçри иккĕмĕш номерлĕ шкулти вăтам классенче вĕренекенсем математикăпа физика эрнине кăсăклă ирттерчĕç. Чи малтанах 8–9-мĕш классем хушшинче шашкăпа шахмат турнирĕ пулчĕ. Турнира Т. И. Лаврентьева йĕркелерĕ. Вăл шкулта математика предметне вĕрентет. Шашка - шахмат вăййисем çав предмета алла илмелли хăнăхусене аталантараççĕ. Татьяна Ивановна 5 «а» тата 5»б» классенчи вĕренекенсемпе хаваслисемпе тавçăруллисен ăмăртăвне ирттерчĕ. Клуб ĕçне курма пынисене те, вăйăна хутшăннисене те çак мероприяти питĕ килĕшрĕ.

Эрне иртни те сисĕнмерĕ. Н. З. Федотова вĕрентекен 7 «а» класс ачисемпе, Л. И. Васильева 7 «б» класс ачисемпе кăсăклă мероприятисем йĕркелерĕç. Юлашкинчен, эрне вĕçĕнче, вĕренекенсене илемлĕ «сцена» йыхравларĕ. «Математика ăçта çухалнă?» хаваслă сценари тăрăх лартнă спектакль пурне те тыткăнларĕ. Ку хутĕнче 6 «б» класс (ертсе пыраканĕ – Г. Н. Макарова) хăйсен ăсталăхне кăтартрĕ. Çак уява ачасем тăрăшса хатĕрленнĕ: кабинетра паллă математиксен каларăшĕсене çырса çакнă. Слайдсем хатĕрленĕ. Тамара Николаевна пулăшнипе ачасем кăткăс предметсене килĕштерсе вĕренме пуçларĕç. Палăртса хăварас килет, çакăн евĕрлĕ эрнесенче кăткăс предметсем ансатланаççĕ, вĕсене ачасем кăмăлласах вĕренме пуçăнаççĕ.

***Л. ЛАВРЕНТЬЕВА,***
***9-мĕш класс вĕренекенĕ.***

### ОТВЕТЫ НА КРОССВОРД «НОВОГОДНИЙ», ОПУБЛИКОВАННЫЙ В №107

**СЛЕВА НАПРАВО:** 1. Дозор. 3. Корона. 5. Маг. 6. Шуба. 7. «Иоланта». 9. Раут. 11. «Есаул». 14. Сало. 15. Арак. 18. Индиана. 20. Апаш. 21. Еда. 23. Николаев. 25. Масверк. 27. Клаус. 28. Ром. 31. Тропарь. 33. Флуер. 36. Стамнос. 37. Ратуша. 38. Вечер. 41. Сталин. 43. Баба. 45. Адам. 47. Нрав.

**СПРАВА НАЛЕВО:** 2. Посох. 4. Борода. 5. Мясо. 6. Шар. 8. Гена. 10. Пастила. 12. Апарт.13. Лори. 16. Плед. 17. Накидка. 19. Айра. 22. Дар. 24. Тибет. 26. «Чародеи». 29. Акт. 30. Краса. 32. Братина. 34. Хлопушка. 35. Лавсан. 36. Сметана. 39. Ведро. 40. Ясак. 42. Амоний. 44. Ревю. 46. Бусы.

**ООО «РЕАЛ-БИЗНЕС-ЛЕС»**

**ПРИГЛАШАЕТ на постоянную работу бухгалтера, водителей, сварщиков, слесарей, разнорабочих. Зарплата – после собеседования. Обр.: п. Ибреси, ул. Советская, 35. Тел. для справок: 89022408550.**

**Библиотечные работники района глубоко скорбят по поводу преждевременной смерти заведующей Нижнеабакасинской библиотеки Большеабакасинского сельского поселения**
**ПАВЛОВОЙ**
**Людмилы Ивановны**
**и выражают искреннее соболезнование семье, родным и близким покойной.**

**«Путиловка» колхоз, мĕнпур ял-йыш ялти библиотека заведующийĕнче чылай çул ĕçленĕ**
**Людмила Ивановна**
**ПАВЛОВА**
**вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çывăх тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.**

**«Путиловка» колхоз, мĕнпур ĕçченсем хуçалăхра чылай çул тĕрлĕ ĕçсенче тăрăшнă**
**Валентина Сергеевна**
**МАКАРОВА**
**вăхăтсăр вилнĕ пирки унăн çемйипе, тăванĕсемпе тарăннăн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.**

**«Путиловка» колхоз правленийĕ хуçалăхра нумай çул тĕрлĕ ĕçсенче вăй хунă**
**Петр Михайлович**
**МИХАЙЛОВ**
**вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе, çывăх çыннисемпе пĕрле чун-чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.**

**«Красный партизан» колхоз правленийĕ, профком, пĕтĕм ял-йыш хуçалăхри яваплă вырăнсенче ĕçленĕ**
**Вячеслав Алексеевич**
**ПАВЛОВ**
**вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе, çывăх çыннисемпе тата тăванĕсемпе пĕрле чун-чĕререн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.**

**Шкулта пĕрле вĕреннĕ, ун хыççăн та пĕрпĕринпе тачă çыхăну тытнă, телей-савăнăçа, хуйха-суйха кирек хăçан та пĕрле пайланă çывăх тус-юлташăмăр**
**Вячеслав Алексеевич**
**ПАВЛОВ**
**йывăр чире пула вилсе кайнă пирки чун-чĕререн хурланни çинчен пĕлтеретпĕр.**
***Пучинкери Н. К. Кирилловпа унăн çемйи.***

**Кирек хăçан та кăмăлтан кăна калаçнă, пĕрпĕрне чунтан-вартан хисепленĕ, пĕр-пĕринпе тĕл пулсах тăнă**
**Вячеслав Алексеевич**
**ПАВЛОВ**
**пирĕнтен вăхăтсăр уйрăлса кайнă пирки унăн çемйипе, тăванĕсемпе, çывăх çыннисемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтеретпĕр.**
***Чăрăшкассинчи А. Т. Маргидановпа унăн çемйи.***

**Энтриелĕнчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулта хуçалăх заведующийĕ пулса ĕçлекен О. А. Петровăн, Н. Г. Петрован амăшĕ, хунямăшĕ**
**Елизавета Ивановна**
**ПЕТРОВА**
**вилнĕ пирки вĕсен çемйисемпе, çывăх тăванĕсемпе пĕрле чун-чĕререн хурланни çинчен пĕлтеретпĕр.**
***ПĔРЛЕ ĔÇЛЕКЕНСЕМ.***

Ответственность за подробность и точность фактов и прочих сведений, опубликованных в газете, несут авторы. Редакция может публиковать статьи в порядке обсуждения, не разделяя точку зрения автора.

*Главный редактор*
*АЛИМАСОВ К. Д.*

Çĕнтерӳшĕн
(За победу)

Учредитель: Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела ЧР

Адрес РГУ «Редакция Ибресинской райгазеты «За победу»: 429700, п. Ибреси, ул. Садовая, д. 6

ТЕЛЕФОНЫ: главный редактор — 2-11-92, ответственный секретарь — 2-11-93, отдел сельской жизни — 2-11-95, отдел по дубляжу — 2-11-96, бухгалтерия, стол заказов — 2-11-97. АДРЕС ГУП "Вурнарский издательский дом": 429220, п. Вурнары, пер. Коммунальный, 4. ТЕЛЕФОНЫ: 2-12-30, 2-19-40.

Газета зарегистрирована Приволжским окружным межрегиональным территориальным управлением Министерства РФ по делам печати, телерадиовещания и средств массовых коммуникаций 13 августа 2002 года. Регистрационный номер ПИ № 18-0918.

Номер набран и сверстан в компьютерном отделе редакции, отпечатан в ГУП "Вурнарский ИД". Индекс 54814. Офсетная печать. Объем 1,5 п. л. Тираж 3439 чув. – 2527, русск. –912. Зак. №

Газета выходит два раза в неделю — по средам и субботам на чувашском и русском языках. Материалы на правах рекламы обозначены знаком Ⓟ

Срок сдачи в печать — 17.00
Сдан в печать в 10.00

Ответственный за выпуск Быкова С. В.